25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
24
ВЫРСАРНИКУН
18(6255) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ленин—Сталин ялавĕпе эпир çĕнтеретпĕр!

В. И. ЛЕНИН вилнĕренпе 19 çул тултарнă кун ячĕпе 1943 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче пулнă траурлă чаплă ларура А. С. Щербаков юлташ тунă доклад

Юлташсем! Аслă Ленин вилнĕренпе 19 çул тултарнă куна Совет Союзĕнчи халăхсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç, хамăрăн тăван çĕршыв чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, хамăрăн паянхи кунçулпа пуласлăхшăн, отечественнăй вăрçă туса пынă условисенче паллă тăваççĕ.

Иртнĕ çулталăк — аслă испытанисен çулталăкĕ, пирĕн партин, пирĕн çĕршывăн чи аслă вăрçă тапхăрĕнчи çулйĕрĕ тĕрĕссине историллĕ пысăк тĕрĕслӳ витĕр кăларнă çулталăк пулчĕ. Сарăлса кайнă çапăçусен масштабĕсем тĕлĕшпе те, Совет Союзĕн вăрçма лекекен тăшманла çарсен характерĕ тĕлĕшпе те кун пек вăрçа тĕнче халиччен курман. Çав тăшманла çарсем хăйсен умне пирĕн çĕршыва пĕтерсе тăкас, пирĕн халăха чуралăха кĕртсе ӳкерес тата вĕлерсе пĕтерес тĕллев лартнă.

Вăрçă совет стройĕн вăйĕпе çирĕплĕхне тĕрĕслемелли хаяр тĕрĕслӳ пулса тăчĕ. Иртнĕ çулта пирĕн государство унăн тӳпине килсе тухнă испытанисене чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Çав çулталăк вăл — совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар, хамăрăн çулпуç тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, вăрçă ĕçĕсене улшăну кӳнĕ, çĕнĕ, татах та пысăкрах çитĕнӳсем валли никĕс туса хатĕрленĕ çулталăк пулчĕ. Иртнĕ çулталăк — совет влаçĕ пулнăранпа чи йывăр тапхăр килсе тухнă вăхăтра ленинизм çĕнтерсе чапа тухнин çулталăкĕ пулчĕ.

Совет Союзĕн вăрçă тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвĕ

Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче 19 уйăх хушши хаяр çапăçусем туса пырать. Юлашки уйăхсем хушшинче вăрçă ĕçĕсенче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Халĕ ĕнтĕ, 1942 çулти çуллахипе кĕркуннехи тапхăрти пек, нимĕçсем мар, пирĕн войскăсем хĕсеççĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар ылханлă тăшмана пыра-пыра çапать, совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатса пырать. Халĕ ĕнтĕ вăрçă ĕçĕсенчи пуçарулăха нимĕçсемпе вĕсен хӳрешкийĕсем мар хăйсен аллинче тытаççĕ, пирĕн Хĕрлĕ Çар, Верховнăй Главнокомандовани планĕ тăрăх кĕрешсе пырса, тăшмана çинеçинех пыра-пыра çапать.

Пирĕн çар вăрçăра тунă пысăк результатсем куçа курăнмалла туха тăччăр тесен, вăрçă ĕçĕсен малашлăхĕ Совет Союзĕшĕн ырă пуласси уçăмлăн тухса тăтăр тесен, пирĕн государство хальхи вăхăтри вăрçă ĕçĕсенче мĕнле вырăн йышăнса тăнине кĕскен те пулин çутатса памалла, отечественнăй вăрçăн хальхи тапхăрĕнче çапăçакан çĕршывсем мĕнле вырăн йышăнса тăнине танлаштарса пăхмалла. Çакă вăл тĕрĕссипе çапла пулса тăни çинчен фактсем каласа параççĕ.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр кĕрешнипе 1942 çулхи çуллахипе кĕркуннехи вăхăтра нимĕç войскисен авантюристла планĕсене аркатса ячĕ. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă докладра çакна никам сирсе ямалла мар çирĕппĕн кăтартса пачĕ: Гитлер нимĕçсен фашистла войскисем умне 1942 çулхи çуллахипе кĕркуннехи вăхăтра лартнă стратегиллĕ задачăсенчен пĕри те пурнăçа кĕреймерĕç.

Нимĕçсемпе вĕсен союзникĕсем, Европăра иккĕмĕш фронт çуккипе усă курса, Хĕрлĕ Çара хирĕç хăйсен мĕнпур ирĕклĕ резервĕсене кĕртсе ячĕç. Нимĕçсен планĕ çакăн пек пулнă — вĕсем Сталинграда тытса илме, Мускава хĕвелтухăçĕнчен пайса çавăрса илме, ăна Атăлпа Урал тылĕнчен татса хăварма, унтан вара Мускав çине пырса çапса, вăрçа 1942 çулта вĕçлеме ĕмĕтленнĕ. Çав плана пурнăçа кĕртме Гитлер Сталинград çине суйласа илнĕ вуншар дивизие кĕртсе янă. Çĕршер пин нимĕç, совет çĕрĕн кашни километрне хăйсен виллисемпе витĕнтерсе пырса, нумай эрнесем хушши Сталинград патнелле талпăннă.

Кунсăр пуçне, нимĕçсем, чи малтан, Мускава çăмăллăнрах пĕтерсе тăкас тесе, пирĕн резервсене Мускав фронтĕнчен куçарттарса каяс шутпа, çавăн пекех тата пирĕн нефте тытса илес шутпа — кăнтăралла, нефть районĕсем еннелле, пырса çапма хăтланчĕç. Анчах çав плансене хăйсен вăйĕсене тата Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене тĕрĕс шута илмесĕр тунă пулнă, урăхла каласан, вăл плансем авантюристла плансем пулнă.

Çуллахипе кĕркуннехи вăхăтра гитлерла кĕтӳсем урса кайса хĕснине пирĕн çĕршывпа Хĕрлĕ Çар тӳссе ирттерчĕç, вĕсем çав тери аслă геройлăхпа çирĕплĕх кăтартса пачĕç, нимĕçсен стратегиллĕ планĕсене ӳпĕнтерсе хучĕç.

Советăн хĕçпăшаллă вăйĕсен Верховнăй Главнокомандованийĕ нимĕç командованийĕн ĕмĕчĕсене пĕтерсе тăкрĕ кăна мар, вăл çав вăхăтрах хăватлăн хирĕç пырса çапма вăйсем хатĕрлерĕ. 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар наступление куçрĕ те нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче çапса аркатмалли сталинла плана чаплăн пурнăçа кĕртрĕ. Наступленин ултă эрни хушшинче кăна Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче противникăн 36 дивизине пĕтĕмĕшпех çапса аркатрĕ тата 22 дивизине тачă ункăпа çавăрса илчĕ. Нимĕçсен çавăрса илнĕ фашистла войскисене Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкасси халĕ ĕнтĕ вĕçленсе пырать. Пирĕн çулпуç тата полководец Сталин юлташăн ятне тытакан хула патне пымалли вырăнсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсем валли аслă масар пулса тăчĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сталинăн стратегиллĕ планне малалла пурнăçа кĕртсе пырса, Хĕрлĕ Çар наступлениллĕ кĕрешĕве Çурçĕр Кавказа, Центральнăй фронта, Анатри Дон районне, Çурçĕр Донец районне, Воронежран кăнтăртарахри района тата Ленинград патне куçарчĕ, çав пур енсенче те ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Çурçĕр Кавказра Хĕрлĕ Çар нимĕçсене 300 километр ытла сирсе ывăтрĕ те вĕсене малалла йĕрлесе, хăваласа пырать, мухтаса пĕтернĕ нимĕç войскисем вара, совет войскисем пыра-пыра çапнипе, хĕçпăшалсемпе аманнисене пăрахса хăварса, каялла чакаççĕ.

Центральнăй фронтра Хĕрлĕ Çар нимĕçсене пысăк поражени тӳстерчĕ тата стратегиллĕ вырăн йышăнса тăракан паха пункта—Великие Луки хулипе чугунçул узелне йышăнса илчĕ.

Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене Воронежран кăнтăртарахри вырăнта хăватлăн пырса çапрĕ. Совет войскисем кунта та нимĕç оккупанчĕсене нумай пиншерĕн вĕлерсе пĕтереççĕ, вуншар пинĕн тыткăна илеççĕ, тăшманăн хĕçпăшалне тыта-тыта илеççĕ тата халăх пурăнакан пиншер пунктсене гитлерла ирсĕрсенчен ирĕке кăлараççĕ.

Маныч, Анатри Дон тата Çурçĕр Донец районĕсенче пирĕн войскăсем тăшмана малалла йĕрлесе хăваласа пыраççĕ.

Виçĕ кун каярах кăна совет халăхĕшĕн питĕ пысăк савăнăç пулчĕ, вăл пирĕн Ленинград тата Волхов фрончĕсенчи войскăсем Ленинград блокадине çĕмĕрсе татни çинчен пĕлчĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ хăйĕн 1942 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнчи приказĕнче çапла каларĕ: «Тăшман ăна Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен пыра-пыра çапнин хăватне туйса илес кун инçе мар», терĕ.

Пирĕн аслă çулпуçăн тата полководецăн Сталин юлташăн сăмахĕсем пурнăçа кĕрсе пынине, Хĕрлĕ Çар нимĕçсен иртĕхсе кайнă фашистла захватчикĕсен пуçĕсене умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнине паян ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче курса тăрать. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн войскăсем икĕ уйăх хушши наступлени туса пынă вăхăтра — 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи январĕн 19-мĕшне çитиччен — нимĕçсен фашистла çарĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çакăн пек çухатусем тӳсрĕ: пирĕн войскăсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200.000 çынна ытла тыткăна илчĕç. Çав вăхăт хушшинче нимĕçсен фашистла çарĕн, виллисене кăна шутласан та, 500.000 ытла салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсем çухатнă: танксем — 6.000 ытла, тĕрлĕ калибрлă орудисем—12.000 яхăн, самолетсем — 3.500 çити, çавăн пекех боеприпассемпе пулеметсем, винтовкăсемпе автомашинăсем тата ытти çар пурлăхĕсем нумай çухатнă.

Совет войскисем икĕ уйăх хушши наступлени тунă вăхăтра нимĕç çарĕ çынсемпе хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк çухатусем тӳсни нимĕçсен фашистла войскисем йывăр поражени тӳснине пĕлтерет. Çав çухатусем нимĕçсен вăйĕсене хавшатрĕç, тăшман войскисен çирĕплĕхне чылаях чакарчĕç, пачах та урăхла, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем совет войскисен, совет тылĕн çапăçури хăвачĕпе организованноçне çирĕплетрĕç тата Хĕрлĕ Çар нимĕç çарне çапма пултарнине, вăл ăна ăнăçлăн çапнине кăтартса пачĕç.

Совет халăхĕ Ленин—Сталин ĕçне чĕререн парăннине тăшман войскисен тылĕнче партизанла движени анлăн сарăлса кайни те уççăн кăтартса парать. Тăшманăн тылĕнчи совет патриочĕсем хамăрăн тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсем пулса юлчĕç, вĕсем хамăрăн çĕрсене фашистла пусмăрçăсенчен ирĕке кăларассишĕн паттăррăн кĕрешеççĕ. Гитлерла карательнăй отрядсем партизанла кĕрешĕве пусарса лартма темĕн пек тăрăшсан та, совет партизанĕсем хăйсем Хĕрлĕ Çара парса тăракан пулăшăва ӳстерсех пыраççĕ, тăшманăн тылĕсене хăюллăн аркатаççĕ, ылханлă оккупантсене вĕлереççĕ, чугунçул составĕсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере яраççĕ, кĕперсене сирпĕнтереççĕ, тăшманăн çыхăнăвĕпе коммуникацийĕсене аркатаççĕ. Партизанла движени кунран кун сарăлса ӳссе пырать.

Хĕрлĕ Çар нимĕç войскисене хăватлăн пыра-пыра çапни вăрçă тĕлĕшĕнчен кăна мар, вăл çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнчери политика тĕлĕшĕнчен те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хĕрлĕ Çар тунă çитĕнӳсене пула мĕнпур ирĕклĕхе юратакан халăхсем ун çине чĕререн кăмăлласа пăхаççĕ. Вăл халĕ аслă чапа тухрĕ, мĕншĕн тесен никам та мар, вăл —Хĕрлĕ Çар—гитлерла Германие тата унпа пĕр каварлисене хирĕç пыракан вăрçăн мĕнпур йывăрлăхне хăй çинче тӳссе ирттерет.

Çакна та палăртмасăр иртсе кайма юрамасть: вăрçă пынă вăхăтра Германи империализмĕн идеологийĕ тĕпренех хавшарĕ, вăл пĕтĕмĕшпех тăрă шыв çине тухрĕ. Оккупациленĕ çĕршывсенче гитлеровецсем тăвакан «çĕнĕ йĕрке» мĕне пĕлтернине Европăри халăхсем ĕçре курса пĕлчĕç. Ытти халăхсене вĕлерсе пĕтерессисĕр е вĕсене чурасем туса хурессисĕр пуçне, гитлеровецсен урăх нимĕнле тĕллев те çуккине Европăри халăхсем хурлăхлă опыт тăрăх курса ĕненчĕç.

Европăра Гитлера пулăшакансем — итальянецсем, румынсем, венгерсем, финсем — нимĕç çарĕн вăйне ĕненсе тăрассине Хĕрлĕ Çарăн ăнăçăвĕсем хавшатрĕç, фашистла шайккăра тăракансем хушшинче харкашу кăларса ячĕç, малашне татах та пысăкрах харкашу кăларса ярĕç. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнисем, юлашкинчен, çак вăрă-хурахсен кĕтĕвĕ пăсăлса тата саланса каясси патне илсе пырĕç. Çав вăрă-хурахла кĕтӳ, чура пулма килĕшмен тата гитлерла ирсĕр йĕркене пăхăнма килĕшмен халăхсене çаратас тата пĕтерсе тăкас тĕллевпе пĕрлешнĕ.

Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçланă хыççăнхи малтанхи эрнесенче, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нимĕç войскисем пысăк поражени тӳснине Германи халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери общественнолла шухăшран пытарас тесе, гитлерла пуçлăхсем пĕтĕм вăйне хурса тăрăшрĕç. Анчах пăшатана михĕре пытараймăн, çавăнпа вара гитлерла командовани вăрçă ĕçĕсем çинчен хăй майлă, паллах, суйса, ăнлантарса пама хăтланчĕ. Хăварах ăнланатăр, Гитлерпа унăн тарçисем каллех çавтери кулăшла та айванла лару-тăрăва кĕрсе ӳкрĕç.

1942 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче Гитлер нимĕç рейхстагĕнче çапла мухтанса каларĕ: «Эпир Сталинграда штурмлатпăр тата ăна илетпĕр — çакна эсир шанса тăма пултаратăр; эпир мĕн те пулин тытса илтĕмĕр пулсан, унтан пире тапратса кăлараймĕç», терĕ. Халĕ ĕнтĕ пуриншĕн те паллă, Гитлерăн кашни сăмахах — пушă мухтав. Гитлеровецсем Сталинграда илеймерĕç. Унтан та ытларах нимĕç войскисене халĕ Сталинградран 300 километр ытла аяккалла сирсе ывăтнă, нимĕçсен Сталинград патĕнче хупăрласа илнĕ 22 дивизине пĕтерсе тăкасси вара вĕçленсе пырать. Гитлер хăйĕн çав дивизийĕсене ăçта та пулсан «тапратса кăларас» тесе шутлать пулĕ те, анчах çакă вăл ĕнтĕ унтан килмест (залра савăнăçлăн шавлаççĕ).

Гитлерăн алăйтти Геббельс малтанах каласа хунисем те вырăнлă пулмарĕç. 1942 çулхи кĕркунне, нейтральнăй çĕршывăн общественнолла шухăшне хĕсес тесе, Турци журналисчĕпе калаçнă чухне Геббельс: хĕле кĕриччен Хĕрлĕ Çара çапса аркататпăр, тесе шантарнă. Вăл çапла каланă: «эпĕ, хамăн сăмахсене яланах тĕплĕн шухăшласа калаканскер, халĕ ĕнтĕ çапла калама пултаратăп: хĕлле вырăс çарĕ текех Германишĕн хăрушă пулмĕ. Çакна каласа, эпĕ яланхи пекех шанса тăратăп: событисем мана улталамĕç. Эпĕ сирĕнтен тепĕр темиçе уйăхран çакăн çинчен аса илме ыйтатăп», тенĕ. Çак темиçе уйăх иртрĕ, вара Геббельс çак хутра та суйни пуриншĕн те уççăн паллă пулса тăчĕ. Гитлер хĕле кĕриччен пĕтерсе тăкма сăмах панă Хĕрлĕ Çар халĕ нимĕç войскисене вăйлăн пыра-пыра çапать тата нимĕç оккупанчĕсемшĕн нихăçанхи пек мар пысăк хăрушлăх пулса тăрать (алă çупаççĕ).

Юлашки эрнесем хушшинче нимĕç командованийĕ «Хĕвелтухăç фронтĕнчи» лару-тăру çинчен çакăн пек официальнăй пĕлтерĕве темиçе хут та пичетлесе кăларнă: «Берлинра çакă паллă пулса тăчĕ: малалла кăларса тăратнă опорнăй пунктсене пĕтерсе фронт линине кĕскетес ĕçе Германи войскисем планлă йĕркепе туса пыраççĕ. Дон юханшывĕн вăтаçĕрĕнчи районра хальхи вăхăтра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Вырăс войскисем хăшпĕр ăнăçусем турĕç, анчах вырăссем хăйсен операцийĕсене Германи командованийĕ палăртса хунă план тăрăх туса пыраççĕ» (пĕтĕм зал кулать). Куратăр ĕнтĕ, гитлерла командовани хăйĕн элекĕ ăшĕнче çавтери пăтрашса кайрĕ, кунтан ытларах суйма та май çук.

Чăнах та, çавăн пек айванла пĕлтерĕве пичетлесе, хăйсен вăрçă ĕçĕсем çинчен калакан сводкисене вулакансемпе итлекенсене гитлеровецсем ухмах идиотсем тесе шутлаççĕ пулмалла. «Фронт линине тӳрлетни» çинчен, оборона тумалли «лайăхрах рубежсем» йышăнни çинчен, событисем «Германи командованийĕ палăртнă план тăрăх» тата унăн пуçарăвĕ тăрăх аталанса пыни çинчен тата ытти çинчен те çавăн пек суйса каланисем унсăрăн мĕне пĕлтерме пултараççĕ-ха? Гитлерла ставкăн çав пĕлтерĕвĕсене чăнласах йышăнас пулсан, вăл çакна пĕлтернĕ пулĕччĕ: Сталинград патĕнче нимĕçсен, румынсемпе итальянецсен 36 дивизине Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкни, Сталинград патĕнче нимĕçсен 22 дивизине хупăрласа илсе çĕмĕрсе тăкни нимĕç командованийĕ палăртнă план тăрăх пулса пырать иккен;

нимĕçсен, румынсен, итальянецсемпе венгерсен икçĕр пин ытла салтакĕпе офицерĕ совет тыткăнне лекни гитлерла ставка пуçарса пынипе пулнă иккен (кулаççĕ);

1942 çулхи çулла тата кĕркунне нимĕçсем хăйсен темиçе вуншар пин пуçĕсене парса тытса илнĕ Çурçĕр Кавказ районĕсене халĕ оборона тумалли лайăхрах рубежсем йышăнас тесе хăвараççĕ иккен;

Сталинградпа Дон юханшывĕ хушшинчи, Донпа Çурçĕр Донец хушшинчи оккупациленĕ пысăк территорие ирĕке кăларни фронт линине тӳрлетес шухăшпа пулса иртнĕ иккен! Хăйсен элекĕ ăшĕнче йăлтах пăтрашса кайнă гитлеровецсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри лару-тăрăва çавăн пек ăнлантарса пани çавтери кулăшла мари-ха ĕнтĕ? Ухмахла тата айванла суять нимĕç командованийĕ! Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри чăнчăн лару-тăрăва гитлерла пуçлăхсем лайăх пурнăç пирки мар пытарса тăраççĕ!

Отечественнăй вăрçă пулса пынинчен тухса тăракан выводсемпе уроксем мĕнле-ха? Вĕсем çинчен кĕскен каласа пама пулать.

Хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешекен халăха çĕнтерме çук, текен правило хальхи вăрçăра çĕнĕрен, ĕлĕкхи вăрçăсенчи пек те мар, вăйлăраххăн çирĕпленчĕ. Кунта, ыттисенчи пекех, аслă Ленин тĕрĕс калани палăрчĕ. Вăл пирĕн партие çапла вĕрентнĕ: ирĕклĕхĕн ырлăхне тутанса пăхнă, хăйĕн влаçне туса хунă, хăйĕн ырă та аслă идейисемшĕн кĕрешме шутлакан тата кĕрешме пултаракан халăх кирек мĕнле кĕрешӳрен те, вăл кĕрешӳ темĕнле йывăр пулсан та, тăшман темĕнле хаяр тата вăйлă пулсан та, çĕнтерӳçĕ пулса тухать.

Хĕрлĕ Çара çĕмĕрсе тăкас тата Совет Союзне çĕнтерсе илес тĕлĕшпе нимĕç империализмĕ тунă плансем халĕ ĕнтĕ татăклăнах путланса ларчĕç. Вăрçă тендецийĕ, вăл пулса пырас майсем улшăнчĕç, анчах вĕсем гитлерла çаршăн усăллă еннелле мар, Хĕрлĕ Çаршăн усăллă еннелле улшăнчĕç. Мĕн

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем Сальск тата Микоян-Шахар хулисене илнĕ

Январĕн 22-мĕшĕнче Кăнтăр фронтĕнчи войскăсем тапăнса атакăланă хыççăн САЛЬСК хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ.

Кавказ лешьенчи фронтăн войскисем МИКОЯН-ШАХАР хулине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем Армавир хулине тата Волоконовка ятлă район центрне тытса илнĕ

I.

Январĕн 23-мĕшĕнче ЗАКАВКАЗЬЕ фронтĕнчи пирĕн войскăсем, вăйлăн наступлени туса, АРМАВИР хулипе пысăк чугунçул узелне тытса илнĕ.

II.

ВОРОНЕЖ фронтĕнчи войскăсем, наступление малалла аталантарса пырса, ВОЛОКОНОВКА ятла район центрне тата пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ.

9 талăк хушши çапăçса, ВОРОНЕЖ фронтĕнчи войскăсем противникăн 17 пехотнăй дивизине, вĕсенчен: венгерсен 9 пехотнăй дивизине (6, 20, 7, 13, 10, 12, 19, 23 тата 9-мĕш пехотнăй дивизисене) тата уйрăм танковăй бригадăна; нимĕçсен тăватă пехотнăй дивизине (26, 168, 385, 387-мĕш пехотнăй дивизисене); нимĕçсен уйрăм 5-мĕш пехотнăй полкне тата 60 танкран тăракан уйрăм танковăй отрядне; итальянецсен 2, 3, 4-мĕш горно-стрелковăй, 156-мĕш пехотнăй дивизисенчен тăракан альпийски корпусне çĕмĕрсе тăкнă.

Январĕн 22-мĕшĕ тĕлне Воронеж патĕнче тыткăна илнисен хисепĕ 12.000 салтакпа офицер чухлĕ ӳснĕ. Çапла вара, ВОРОНЕЖ фрончĕн районĕнче тыткăна илнисен пĕтĕм хисепĕ 64.000 салтакпа офицера çити ӳснĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

В. И. Ленин вилни 19 çул тултарнă ятпа тунă траурлă чаплă лару

Январĕн 21-мĕшĕнче Мускавра, Кремль двоpецĕн пысăк залĕнче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн, ВКП(б) Мускав область комитечĕн, ВКП(б) Мускав хула комитечĕн, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн, РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн, Ĕçсыннин депутачĕсен Мускав область совечĕн тата Мускав хула совечĕн, ВЛКСМ Мускав хула комитечĕн, ВЦСПС Президиумĕн, столицăри рабочисен-стахановецсен, ударниксен тата интеллигенцин В. И. Ленин вилни 19 çул тултарнă ятпа тунă траурлă чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

6 сехет те 50 минутăра президиум сĕтелĕ патне Сталин, Молотов, Калинин, Андреев, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсем пырса тăраççĕ.

Траурлă чаплă ларăва пынă çынсем Сталинпа унăн соратникĕсене— партипе правительствăн руководителĕсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Хĕрӳллĕн саламланă сасăсем вăйлăн «ура» кăшкăрнă сасăсемпе хутшăнса каяççĕ.

М. И. Калинин юлташ траурлă чаплă ларăва уçăлнă тесе пĕлтерет.

— Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 19 çул иртрĕ. Ăна ура çине тăрса хисеплеме ыйтатăп,— тет Калинин юлташ.

Пурте ура çине тăраççĕ.

М. И. Калинин доклад тума А. С. Щербаков юлташа сăмах парать; ларăва пынă çынсем ăна ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Щербаков юлташăн докладне пурте пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Хăйĕн докладне Щербаков юлташ çапла каласа вĕçлет.

— Сывă пултăр аслă совет халăхĕ тата унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-çар Флочĕ! Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн ячĕ—çĕнтерӳ тума чĕнекен аслă та никам çĕнтереймен ялавĕ!

— Сывă пултăр пирĕн çулпуç тата полководец Сталин юлташ!

Сталина хисеплесе темиçе минута хушши тăвăллăн алă çупса тăраççĕ.

М. И. Калинин юлташ траурлă чаплă ларăва хупăннă тесе пĕлтерет. (ТАСС).

Ленин—Сталин ялавӗпе эпир çӗнтеретпӗр!

В. И. ЛЕНИН вилнӗренпе 19 çул тултарнă кун ячӗпе 1943 çулхи январӗн 21-мӗшӗнче пулнă траурлă чаплă ларура А. С. Щербаков юлташ тунă доклад

(Юлашки. Пуçламăшӗ 1-мӗш страницăра).

чухлӗ нумайрах пурăнăпăр, пирӗн енче çавăн чухлӗ ылтарах лайăх майсем пулӗç. Çав лайăх майсемпе Хӗрлӗ Çар вӗçне çитиех усă курма тата вӗсене ӗçе кӗртме пултарасси пирки иккӗленме кирлӗ мар. Акă мӗншӗн ӗнтӗ совет халăхӗ пуласлăх çине çавтери шанса пăхса тăрать.

Гитлерла пусмăрçăсемпе вӗсен çынçиенле шухăшӗсене хирӗç пыракан вăрçăра хальхи халăхсем нумайӗшӗ пӗрлешрӗç. Çавна май Гитлера хирӗçле государствăсен блокӗ тачăрах та тачăрах пӗтӗçсе пырать, Италипе Германи коалицине çӗнтерме вӗсен пур майсем те пур тата вӗсем çӗнтереççӗ те.

Вунтăхăр уйăх пынă вăрçăра пирӗн çар вăрçă опычӗпе çавтери вăйлăн пуянланчӗ, кучухнехи вăйлă çар, татах та организованнăрах çар пулса тăчӗ, хăйӗн аллине чи çӗнӗ çар техникине илчӗ. Вăл Сталин юлташ туса хатӗрленӗ кучухнехи çар наукин юлашки сăмахӗ тăрăх кӗрешсе пырать. Сталин юлташ хамăрăн аслă çӗршыва тивӗçлӗ çӳллӗшне çӗкленӗ çар искусстви хăйӗн результачӗсене пачӗ ӗнтӗ. Хӗрлӗ Çар пысăк çӗнтерӳсем турӗ, противник çарӗ йывăр поражениссем тӳсрӗ.

Отечественнăй вăрçăри совет тылӗ

Владимир Ильич Ленин пире çапла вӗрентнӗ: вăрçă **ЧĂННИПЕХ** туса пыма организованнăй çирӗп тыл кирлӗ. Чи лайăх çарсене те, революци ӗçне пӗтӗм чӗререн парăнса тăракан чи лайăх çынсене те, вӗсем кирлӗ пекех хӗçпăшалланман пулсан, вӗсене продовольстви парса тăмаççӗ пулсан, вӗсем вӗренмен пулсан, противник çийӗнчех пӗтерсе тăкать» (XXII том, 304 стр.). Ленинăн çак сăмахӗсем хальхи вăрçă условийӗсенче граждăн вăрçипе ютçӗршывсен интервенцийӗ çулӗсенчинчен те пысăкрах вырăн йышăнса тăраççӗ. Çар техники вăрçă ӗçӗсенче халӗ иртнӗ вăрçăсенчинчен чылай пысăкрах вырăн йышăнса тăрать. Кун çумне çакна та хушас пулать: пирӗн çине ултавлăн килсе тапăннă тăшман пӗтӗм Хӗвеланăç Европăн ресурсӗсемпе тенӗ пекех усă курать.

ССР Союзне хирӗç вăрçă пуçласа, нимӗçсем çакна шанса тăнă: малтан пырса çапнă хыççăнах Совет Союзӗн промышленноçӗпе ялхуçалăхӗ йӗркерен тухса кайӗç тата фронт валли хӗçпăшалсем, боеприпассем, продовольстви вӗçӗ-хӗррисӗр парса тăма пултараймӗç, çӗршывра хуçалăх юхăнма тытăнӗ, тенӗ. Нимӗçсем питех те пысăк йăнăш турӗç. Паллах, нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан вăрçăра пирӗн çӗршыв тунă çухатусем нимӗ те тăмаççӗ, пире пурте нимӗн те мар, тесе калани айванла пулнă пулӗччӗ. Эпир чылай пысăк территори çухатрăмăр, ку вăра эпир территорипе пӗрле çынсем, тырпул, металл, топливо, чугунçулсем, промышленность продукцине çухатнине пӗлтерет. Хӗрлӗ Çарăн кашни командирӗпе боецӗн çакна тӗплӗн ăнланса илес пулать. Пирӗн çӗршыв пысăк çухатусем тӳсрӗ. Анчах çавăнпа пӗрлех çакă та факт пулса тăрать: нимӗçсем промышленноçпа ялхуçалăхӗн паха районӗсене тытса илнипе çыхăнса тăракан питех те пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, Хӗрлӗ Çарăн тылӗ хăйӗн задачисене татса пама вăй çитерчӗ, фронта мӗн кирлине пурне те парса тăрассине йӗркелеме пултарчӗ. Совет промышленноçне ишӗлтерсе тăкнă тесе нумай кăшкăрнă нимӗçсем халӗ ӗнтӗ часчасах хăйсене хăйсем çакăн пек ыйту пама тытăнаççӗ: ăçтан тухать вырăссен çавăн чухлӗ хӗçпăшал? — теççӗ вӗсем.

Пирӗн çӗршыв, совет правительстви тата парти ертсе пынипе, вăрçă условийӗсенче хăйӗн хуçалăхне фронт мӗн ыйтнине пурне те вăхăтра тата кирлӗ таран парса тăмалла туса организацилеме пултарчӗ.

Пирӗн государство çакăнпа пӗрле çавтери йывăр задачăсене татса пама пултарчӗ, ун пек йывăр задачăсем пирӗн çӗршыври халăхсем умӗнче тата тӗнчери халăхсем умӗнче иртнӗ тапхăрти мӗнпур истори тăршшӗнче нихăçан та тăман. Çав задачăсенчен пӗри вăл — промышленноçа хăрушлăхра тăракан районсенчен çӗршывăн хӗвелтухăçӗнчи районӗсене куçарса каясси пулнă. Чи малтан, хамăрăн промышленноçа тăшман аллине памалла мар пулнă, мӗн турттарса тухма май пур, çавсене пӗтӗмпех турттарса тухмалла пулнă, турттарса тухма май çуккине—пӗтерсе тăкмалла пулнă. Çак задачăна пурнăçа кӗртнӗ. Пирӗн промышленноçăн пуянлăхӗсемпе гитлеровецсем усă курма пултараймарӗç.

Анчах та пирӗн задача — предприятисенчи оборудованисене хăрушлăхра тăракан районсенчен турттарса тухассинче кăна мар пулнă, чăн та, çакă вăл хăй те питех те йывăр ӗç. Çавăн пекех тата предприятисене çӗнӗ вырăнсенче хăвăрт ура çине тăратса, ӗçе ямалла пулнă. Сăмах кунта оборудованисене куçарса каясси çинчен кăна мар, промышленноçа отраселӗ-отраселӗпех куçарса каясси çинчен, çӗршер фабрикăсемпе заводсене нихăçан пулман кӗске срокра хӗвелтухăçнелле куçарса каясси çинчен пынă. Çапах та эвакуаци йӗркипе куçарса пынă предприятисене çӗнӗ вырăнсенче хăвăрт ура çине тăратса ӗçе янă. Вӗсенчен нумайӗшӗсем халӗ вăрçăччен хинчен ытларах продукци туса кăлараççӗ.

Предприятисене куçарса кайнипе пӗрлех, çакăнтан çăмăл мар тепӗр задачăна хăвăрттăн татса памалла пулнă — топливăпа электроэнерги, хура тата тӗслӗ металсене туса кăларассине сармалла, тимӗрпе марганец рудине кăларассине, торф кăларассине ӳстермелле пулнă тата ытти те. Çакна валли, халь ӗçлекен предприятисен, шахтăсемпе рудниксен ӗçне лайăхлатнипе пӗрлех, çӗнӗрен предприятисем тумалла е ӗçлекеннисене аслăлатмалла пулнă. Çак йывăр задачăна та эпир ăнăçлăн пурнăçа кӗртсе пыратпăр. Хӗвелтухăçӗнче промышленноçăн капитальнăй строительстви анлăн сарăлса кайрӗ. Эпир çӗнӗ домнăсемпе мартенсем, электростанцисемпе шахтăсем, рудниксем тăватпăр. Строительствăн чылай паха объекчӗсем строя кӗчӗç те ӗнтӗ, строительство пирӗн çӗршыв хăй те халиччен курман хăвăртлăхсемпе пулса пырать.

Вăрçă вăхăтӗнчи питех те йывăр задачăна—промышленноçпа транспорт валли çӗнӗ рабочисем суйласа илсе хатӗрлес задачăна татса панă. Ремесло тата чугунçул училищисемпе ФЗО шкулӗсем, Сталин юлташ пуçарнипе вăрçăччен тунă скерсем, çак ӗçре çавтери пысăк вырăн йышăнчӗç тата йышăнса тăраççӗ те. Вăрçă пуçланнăранпа вӗсем пирӗн промышленноçпа транспорта вӗрентсе хатӗрленӗ миллион рабочине яхăн пачӗç. Ӗç резервӗсен системисӗр пуçне, промышленноçа çӗр пин çын рабочи ытла, уйрăмах хӗрарăмсем, ӗçе кӗчӗç. Кӗске вăхăт хушшинчех вӗсем хăйсен ӗçӗн техникине вӗренсе алла илчӗç те халӗ ӗнтӗ фронтшăн ăнăçлăн ӗçлеççӗ.

Тăван çӗршыв умӗнчи тивӗçлӗхе туйса тăни пирӗн халăхăн ӗçри хăватлă çӗкленӗвне пуçарса ячӗ, çакă вăл Пӗтӗм Союзри социализмлă ăмăрту халиччен нихăçан пулман вăйпа сарăлса кайнинче палăрса тăрать. Совет патриочӗсем пирӗн предприятисенче хăйсен мӗнпур вăйӗсене тăшмана çапса аркатнă çӗре параççӗ. Совет çыннисем хăйсен вăйӗсене хӗрхенмесӗр геройла кӗрешни вăл—хамăрăн совет çӗршывне пӗтӗм чун-чӗререн юратнине, тăшмана мӗнле пулсан та çӗнтерес тесе, кирек мӗнле жертвăсемпе асапсем те тӳсме хатӗр тăнине, кирек мӗнле йывăрлăха та çӗнтерме хатӗр тăнине кăтартса пани пулать.

Паллах, пирӗн промышленность умӗнче пысăк йывăрлăхсем тăнă тата тăраççӗ те. Çав йывăрлăхсем, чи малтан, хура металлурги тата топливăпа (энергетика бази промышленноçпа мӗнпур халăх хуçалăхӗн ӳссе пыракан ыйтăвӗсенчен кăшт каярах юлса пынинче тăраççӗ. Анчах çав йывăрлăхсене çӗнтерме пулать.

Пирӗн промышленноçăн боевой задачи — хура металлургин çӗнӗ агрегачӗсене, электростанцисене, çӗнӗ шахтăсемпе рудниксене хăвăртрах туса çитерсе ӗçе ярасси, çавăн пекех тата пур пек мощноçсене лайăхрах ӗçлеттересси пулса тăрать.

Чӗртаварпа топливăна, электроэнергине, металсене перекетлӗн расходласси тата вырăнти пур тӗрлӗ ресурссене те мобилизацилесси питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Опыт çакна кăтартса парать: вырăнти пуçарулăх фронта снабжени парса тăрас ӗçе ӳстернӗ çӗрте, куллен кирлӗ таварсене туса кăларассине ӳстернӗ çӗрте чылай пысăк та çӗнӗ çăлкуçӗ пулса тăма пултарать.

* * *

Вăрçă ялхуçалăх ӗçне чылай пысăк йывăрлăхсем кӳчӗ. Колхозсемпе совхозсен ялхуçалăх продукчӗсене туса кăларассине ӳстермелле пулчӗ. Хăйсемшӗн çӗнӗ культурăсем пулса тăракан чылай культурăсем акса тăвассине алла илсе аталантарса пымалла пулчӗ, тăшман пирӗн ялхуçалăхӗн хăшпӗр районӗсене тытса илнине пула пирӗн çӗршыв тӳснӗ çухатусене хăшпӗр тӗлӗшрен витмелле пулчӗ.

Пирӗн ялхуçалăхӗ çав задачăсене татса пачӗ. 1942 çулта акнă çӗрсен лаптăкӗ, 1941 çулхипе танлаштарсан, 2 миллион гектар чухлӗ ӳсрӗ. Вăрçă пуçланнăранпа хӗвелтухăçӗнче тӗштырă акса тумалли никӗсе анлăлатнă, çӗрулмипе пахча-çимӗçсем, сахăр кăшманӗ тата продовольствипе техникăллă ытти культурăсем акассине ӳстернӗ.

Ялхуçалăх ӗçӗсене ӗçлеме пултаракан çитӗннӗ çынсем кăна мар, çавăн пекех ваттисем те, ача-пăчасем те хутшăннă. Колхозниксене пулăшма хуласенчи рабочисемпе служащисем тата вӗренекенсем пычӗç.

Çуракине, тырпулсем пухса кӗртессине, çавăн пекех тата кӗракине те 1942 çулта нумай облаçсенче 1941 çулхинчен лайăхрах та хăвăртрах тата организованнăрах туса ирттернӗ. Пирӗн колхозсемпе совхозсем «халăхпа Хӗрлӗ Çара —продовольстви, пирӗн промышленноçа — чӗртавар тӳрӗ кăмăллăн та йӗркеллӗн парса тăраççӗ» (Сталин).

Ялхуçалăхӗнчи çав çитӗнӳсен никӗсӗ — пирӗн çӗршывра Ленин хушса хăварнă тăрăх тунă колхоз стройӗ пулса тăрать. Паллах, пӗччен хресченсен вакă хуçалăхӗ вăрçă йывăрлăхӗсене тӳссе ирттереймен пулӗччӗ тата çарпа тăван çӗршыва кирлӗ продовольствипе чӗртавара парса тăрайман пулӗччӗ. Колхоз стройӗ пуррине пула кăна совет государстви вăрçă туса хунă йывăрлăхсене çӗнтерсе пырать.

Нимӗçсен ылханлă фашистла захватчикӗсене çапса аркатма Хӗрлӗ Çара пулăшас тесе колхоз хресченӗсем пӗтӗм вăя хурса ӗçлеççӗ. 1942 çулхи çуркунне нумай колхозсенче планран ирттерсе оборона фончӗ валли тырпул акас ӗçе организациленӗ, çавăн пек акни пирӗн Хӗрлӗ Çар валли тырпулпа пахча-çимӗçсем çӗнӗрен чылай пысăк хисеппе туса пама май пачӗ. 1942 çулăн вӗçӗнче, Тамбов тата Саратов колхозникӗсем пуçарнă тăрăх, танксен колоннисемпе çар самолечӗсен эскадрильисене тума укçатенкӗ пухасси пуçланса кайрӗ. Укçа-тенкӗпе пӗрлех колхозниксем Хӗрлӗ Çар фондне обществăллă фондсенчен тата хăйсен килти запасӗсенчен тӗштырă, пахча-çимӗçсем, аш-какайпа ытти тӗрлӗ продуктсем хываççӗ.

Малта пыракан çынсен пуçарăвӗ пирӗн çӗршыври колхозниксемпе рабочисен тата служащисен мӗнпур массине хавхалантарса çӗклерӗ, çӗршыв оборонин нушисем валли харпăрхăй тӗллӗн укçа-тенкӗпе тырпул хывас ӗçе çавтери анлăн пуçарса ячӗ. Хӗрлӗ Çар валли танксемпе самолетсем тата ытти тӗрлӗ хӗçпăшалсем тума укçа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе халăх пуçарса янă патриотла движени колхоз хресченӗсен интересӗсем совет çӗршывӗн кунçулӗпе иксӗлми таччăн çыхăнса тăнине уçăмлăн кăтартса парать. Хресченсем историре малтанхи хут хăйсен государствине, хăйсене ирӗклӗ те культурăллă, пуян пурнăç туса панă государствăна вăрçăра хӳтӗлеççӗ. Хресченсем историре малтанхи хут вăрçа хăйсен ӗçӗ тесе шутлаççӗ, çав вăрçă мӗнле вӗçленнинчен вӗсен малашнехи кунçулӗ килет.

Колхозсем умӗнче халӗ икӗ питех те паха задача тăрать: пӗррремӗшӗ вăл—государствăна тырă парас ӗçе вӗçлесси. Чылай облаçсем ӗнтӗ тырă парса татрӗç. Вӗсемпе пӗрлех кая юлса пыракан облаçсене районсем те пур-ха. Вӗсен задачи—государствăпа Хӗрлӗ Çар умӗнче хăйсен обязательствисене кӗске срокра та пӗтӗмӗшпех пурнăçа кӗртесси пулса тăрать.

Халӗ колхозсем умӗнче тăракан питех те паха иккӗмӗш задача вăл—1943 çулхи акана хатӗрлесси. 1943 çулта пирӗн ялхуçалăх продукчӗсем иртнӗ çулхинчен ытларах туса илмелле. Çакă вăл пире 1943 çулхи çуракине тӗплӗн хатӗрленес ӗçре хӗллехи тапхăрпа кăтартуллăн усă курма хушать.

Отечественнăй аслă вăрçă кунӗсенче, рабочисемпе тата колхозниксемпе пӗрле, совет интеллигенцийӗ нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç кӗрешес ӗçе хăйӗн пӗтӗм вăйӗпе пӗлӗвне парать. Çӗнӗ хӗçпăшалсем шухăшласа тупса вӗсене туса кăларас ӗçе организацилекен совет конструкторӗсем, инженерӗсем, техникӗсем мӗн тума пултарнине пирӗн интеллигенци вăрçă вăхăтӗнче уйрăмах лайăх кăтартса пачӗ. Чӗртаварăн тата энергетикăн çӗнӗ ресурсӗсене çӗршывăн хӗвелтухăç районӗсенче шыраса тупас тата вӗсемпе усă курмалли çӗнӗ майсене туса хатӗрлес тӗлӗшпе совет ученăйӗсем туса пыракан ӗç çӗршывăн вăрçăри вăй-хăватне ӳстерессинче питӗ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирӗн инженерсем—техника работникӗсем промышленноçа вăрçă ыйтнă пек урăхлатса çӗнетес тӗлӗшпе, пирӗн предприятисене хӗвелтухăçне куçарса вырнаçтарас, çӗнӗ заводсем тăвас тӗлӗшпе калама çук пысăк ӗç туса ирттерчӗç. Тăван çӗршыв умӗнчи хăйсен тивӗçлӗхне совет врачӗсем тата медицинăри мӗнпур работниксем вăй-хала шеллемесӗр пурнăçласа пыраççӗ, вӗсем пирӗн нумай пиншер боецсен пурнăçӗсене çăлса хăварчӗç. Вăрçă вăхăтӗнче советăн агрономи наукинчи работникӗсем, совет учителӗсем, искусствăпа литературă работникӗсем пысăк ӗç туса ирттерчӗç. Патриотла çӗкленӳпе хавхаланса, рабочисемпе тата хресченсемпе фронтра та, тылра та таччăн тытăçса ӗçлесе, совет интеллигенцийӗ фашистсен ылханлă захватчикӗсене çӗмӗрсе тăкма Хӗрлӗ Çура пулăшать.

Иртнӗ çулта парти туса ирттернӗ организаторла ӗç пирӗн пӗтӗм çӗршыва çӗнетсе улăштарчӗ, вăл пирӗн совет тылӗнчи çынсене те улăштарса çӗнетрӗ. «Çынсем типтерлӗрех, çыпăçуллăрах тата дисциплинăллăрах пулса тăчӗç, вăрçă ыйтнă пек ӗçлеме вӗренчӗç, тăван çӗршыв умӗнчи, ăна фронтра хӳтӗлекенсем умӗнчи — Хӗрлӗ Çар умӗнчи хăйсен тивӗçлӗхне ăнланса ӗçлеме пуçларӗç...

Пирӗн çӗршывăн хальхи пек çирӗп те организованнăй тыл нихăçан та пулман-ха» (Сталин). (Алă çупаççӗ).

Совет Союзӗн вăйӗпе çирӗплӗхӗн çăлкуçӗсем

Пӗтӗм тӗнче, пирӗн туссемпе пирӗн тăшмансем те хăйсене пӗр ыйту параççӗ: Хӗрлӗ Çар нихăçан илтмен пек çирӗп тата паттăр пулнин сăлтавӗ мӗнре-ха, Совет Союзӗн вăй-хăвачӗн тата çирӗплӗхӗн çăлкуçӗсем мӗнре-ха?

Çак ыйту çине пирӗн тăван çӗршывăн юлашки чӗрӗк ӗмӗр хушшинчи историйӗ ответ парать. Октябрьти Социализмлă Аслă революцие пула, совет çӗршывӗн халăхӗсем, большевиксен партийӗ ертсе пынипе, Ленинпа Сталин çул кăтартса пынипе, кирек мӗнле пусмăрлăхран та хăтăлчӗç, çӗнӗ обществăллă строй туса хучӗç, чăнчăн халăх влаçӗ, совет влаçӗ туса хучӗç. Историре чи малтанхи хут халăхăн кунçулӗ унăн хăйӗн аллинче тăрать; пирӗн çӗршыври кашни ӗççыннин кунçулӗпе интересӗсем тăван çӗршывăн, пӗтӗм государствăн кунçулӗпе тата интересӗсемпе тачă пӗрлешсе тăраççӗ. Совет влаçӗ—ӗççыннисен хăйсен влаçӗ; çакăнта ӗнтӗ унăн вăйӗсен, çирӗплӗхӗн çăлкуçӗ. Пирӗн çӗршыври кашни ӗçынни: нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç пыракан отечественнăй аслă вăрçăра эпӗ хамăн халăх влаçне, хамăн ирӗклӗхпе никама пăхăнманлăха хӳтӗлесе тăратăп, тесе калама пултарать.

Совет государствин вăйӗ—вăл рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин никам аркатайми союзӗ çине тайăнса тăнинче пулать. Шăпах çак союзра ӗнтӗ совет стройӗн аслă вăйӗ. Отечественнăй вăрçă пынă вăхăтра çак союз татах та тӗрекленчӗ, çирӗпленчӗ. Ку вара совет стройӗ татах та ытларах çирӗпленнине пӗлтерет.

Мӗнпур расăсемпе нацисен пӗртанлăхӗн никӗсӗ çинче совет государстви пирӗн çӗршыври пур халăхсене те пӗрлӗхлӗ, тачă пӗрлешнӗ çемьене пӗтӗçтерчӗ, çапла майпа пирӗн çӗршывăн вăйӗсене питех те йышлăлатрӗ. Халӗ советлă Социализмлă Республикăсен Союзне кӗрекен кашни халăхах: нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç пыракан таса вăрçăра эпӗ хамăн тата пирӗн çӗршыври халăхсен пӗтӗм çемьин ирӗклӗхне, никама пăхăнманлăхне тата телей правине хӳтӗлесе тăратăп, тесе калама пултарать.

Мирлӗ строительствăн çирӗм çулӗ хушшинче Совет Союзӗнчи ӗççыннисем Российăн ӗмӗрхи кая юлнăлăхне пӗтерчӗç тата пирӗн çӗршыва малта пыракан государство туса хучӗç. Çӗршыва индустриализацилемелли тата ялхуçалăхне коллективизацилемелли ленинла-сталинла плансене историллӗ питех те кӗске вăхăтра пурнăçа кӗртнӗ. Çӗнӗ, социализмлă экономика тăвас ӗçе кирек мӗнле пусмăрлăхран та хăтăлнă халăхăн творчествăллă аслă вăйӗсемпе пултарулăхӗсене хунă. Массăсем паттăрлăх кăтартса ӗçленине пула, пирӗн çӗршыв индустриллӗ, колхозлă çӗршыв, апла пулсан вара вăйлă та хăватлă çӗршыв пулса тăчӗ. Пирӗн çарăн кашни воинӗ вăл хăй хӗçпăшалсăр, боеприпассемсӗр тата продовольствисӗр тăрса юлас çуккине пӗлет, пӗтӗм тӗнчери иртнӗ вăрçăра патша çарӗн салтакӗсем час-часах çавăн пек тăрса юлнă. Пирӗн çарсене пӗтӗм совет халăхӗ вăйлăн пулăшса тăни —пирӗн çарăн вăй-хăвачӗн, çирӗплӗхӗн тата хавхаланăвӗн çăлкуçӗ пулса тăрать, мӗншӗн тесен Хӗрлӗ Çарăн кашни воинӗ ун хыçӗнче пӗтӗм совет халăхӗ тăнине ăнланать.

Совет халăхӗн вăйӗ—унăн никам аркатайми моральлӗ-политикăллă пӗрлӗхӗнче. Пирӗн пӗтӗм халăх большевикла парти тавра тата хăйӗн çулпуçӗ Сталин юлташ тавра халӗ нихăçанхи пек те мар тачă пӗрлешсе тăрать (тăвăллăн алă çупаççӗ).

Ленин—Сталин партине халăх мӗнтери вăйлăн шанса тănине отечественнăй аслă вăрçă питех те уççăн кăтартса пачӗ. Хаяр тата хăрушлăхсемпе çыхăнса тăракан вăрçă кунӗсенче большевикла партие çӗнӗ, пӗтӗм чӗререн парăнса ӗçлекен боецсем пиншерӗн кӗреççӗ. Парти ретне халӗ тăшмана хирӗç кӗрешме хăйсен пурнăçне пама хатӗр тăракан çынсем кӗреççӗ. 1942 çулта большевикла парти ретне 1.340.000 ӗççынни кӗни çинчен каласан та çителӗклӗ. Çак факт кăна та ӗнтӗ халăх партие мӗнле вăйлăн шанса тăнине, Ленин—Сталин партийӗ халăхпа мӗнле çирӗппӗн çыхăнса тăнине кăтартса парать.

Совет Союзӗн халăхӗсем тăван çӗршыв умне тухса тăнă хăрушлăхăн пысăкăшне ăнланса илчӗç, хăйсен мӗнпур материальнăй тата духовнăй вăйӗсене тăшмана хирӗç кӗрешме мобилизацилеççӗ. Патриотизм примерӗсене Россия историйӗ сахал мар пӗлет, ун чухне халăхăн малта пыракан представителӗсем тăван çӗршывшăн мӗн пуррине йăлтах панă. Анчах халӗ, нимӗç империалисчӗсене хирӗç пыракан ирӗклӗхлӗ вăрçăн кунӗсенче пулнă пек массăллă героизма ССР Союзӗнчи мӗнпур халăхсен çирӗп кăмăлӗ пек пӗрлӗхлӗ кăмăла истори пӗлмен-ха. Пирӗн халăх нихăçан та хальхи пек организованно пулман-ха. Çакă ӗнтӗ пирӗн халăха Ленин—Сталин партийӗ çул кăтартса организацилесе пынинчен килет. Халăхпа çирӗппӗн çыхăнса тăни парти вăйӗсене ӳстерет, парти йӗри-тавра пӗтӗçнӗ халăх вара—никам çӗнтерейми пулса тăрать.

Хӗрлӗ Çар тӗрӗс ӗçшӗн, ырă та хисеплӗ тӗллевшӗн, пирӗн тăван çӗршывăн чыслăхӗшӗн, ирӗклӗхӗшӗн тата никама пăхăнманлăхӗшӗн кӗрешни ăна никам аркатайми вăй парать. Пирӗн çарăн кашни воинӗ хăйӗн пурнăçӗпе ирӗклӗхне, хăйӗн çемьин, хăйӗн халăхӗн пурнăçӗпе ирӗклӗхне вăл тăшмана пӗтерсе тăкмасăр çăлса хăварма пултарайманнине пӗлсе тăрать. Е юлашки юн тумламӗ юлмиччен кӗрешсе хамăрăн тăван çӗршыва хӳтӗлесе хăвармалла, е хăвна, хăвăн çемьюна, хăвăн халăхна нимӗç çынçиенӗсен чуралăхне памалла—çапла тăрать ыйту советăн кашни воинӗ умӗнче. Çавăнпа та, совет воинӗсен массăллă героизмне, вӗсен çирӗплӗхне тата тимлӗхне, вӗсем тăшмана çӗнтермелли искусствăна вӗренсе алла илес тӗлӗшпе çав тери тăрăшнине ăнланмалла та ӗнтӗ.

Пирӗн тăван çӗршыв вăйӗсен, Хӗрлӗ Çар вăйӗсен çăлкуçӗсем çакăнта ӗнтӗ. Çав вăйсемпе усă курса совет халăхӗпе Хӗрлӗ Çар пирӗн çӗршыва нимӗç захватчикӗсенчен ирӗке кăларӗç тата фашистла тасамарлăхран тасатӗç.

Ленин ялавӗ айӗнче тăрса, Сталин ертсе пынипе—эпир çӗнтеретпӗр!

Пирӗн çӗршыв тунă пысăк çухатусемпе жертвăсене пăхмасăр, отечественнăй вăрçă фрончӗсенчи лару-тăру халӗ, пӗлтӗр те пирӗн çар тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапнă пулин те, пӗлтӗрхинчен чылай лайăхрах пулса пырать. Çакăн çинчен калать Верховнăй Главнокомандованин стратегиллӗ планӗсене пӗр пăркаланмасăр пурнăçа кӗртсе пыракан совет войскисен ăнăçлă наступленийӗ.

Вăрçăн иртнӗ тапхăрӗнче Хӗрлӗ Çар оборонăллă тата наступленилллӗ çапăçусем туса пынине пула, нимӗçсен фашистла захватчикӗсене хирӗç вăйлăн кӗрешнине пула тăшмана çӗнтерес ӗç валли условисем тата çирӗп никӗс туса хунă.

Хӗрлӗ Çар çапăçусенче пиçӗхсе тӗрекленчӗ, вăйлăрах та организованнăрах пулса тăчӗ. Вăл кучухнехи вăрçă опычӗпе пуянланчӗ, унăн боецӗсемпе командирӗсем çапăçусен вут-хӗмӗнче вăрçă искусствин никӗсӗсене ăнăçлăн вӗренсе алла илеççӗ. Совет войскисем пирӗн рубежсене хӳтӗлесе тăма кăна мар, тата тăшман оборонине çӗмӗрме те, пултаруллă маневрсем туса противника çавăрса илме тата пӗтерсе тăкма та вӗренсе çитрӗç.

Вăрçă пынă вăхăтра совет тылӗнчи организованноçпа дисциплина ӳссе çирӗпленчӗç, фронта пулăшмалли çӗнӗ хăватлă çăлкуçсем палăрчӗç. Ним иккӗленмелли те çук, пирӗн çӗрсене фашистла захватчиксенчен ирӗке кăларассишӗн пыракан кӗрешӳре совет халăхӗ Хӗрлӗ Çара вăйлăрах та вăйлăрах пулăшу парса тăрӗ.

Халӗ ӗнтӗ, тăшмана çӗнтермелли никӗсе тунă хыççăн, пирӗн çӗрсене фашистла захватчиксенчен ирӗке кăларас ӗç совет патриочӗсем мӗнпур вăйсене хурса ӗçленинчен тата пирӗн çӗршыври пур майсене те мобилизациленинчен килет.

Хӗрлӗ Çар пысăк çитӗнӳсем тунă пулин те, тăшмана ӗнтӗ çапса аркатнă тесе шухăшлани айванла ӗç пулнă пулӗччӗ. Тăшманăн вăйӗсем хавшанă тата вӗсене вӗçне çитиччен пухнă, анчах тăшман вăйлă-ха, нимӗç захватчикӗсем çӗнӗ авантюрăсем тума пăхӗç тата пире сиен кӳме пултарӗç. Халӗ лăпланса ларни—пирӗн çӗнтерӳ ӗçӗшӗн хăрушă та сиенлӗ пулнă пулӗччӗ.

Ӗçсем начар пынă чухне большевиксен паникăна ӳкесси тата найкăшса ларасси çук. Çавăн пекех большевиксем çитӗнӳсемпе лăпланса ларма та пултараймаççӗ, çакна валли вӗсен право çук. Çитӗнӳсемпе пуç çавăрăнни, ӗçсем ăнăçсăр пулнипе паникăна ӳксе найкăшса ларни пекех, сиенлӗ. Чăнлăх çине куçпа тӳррӗн пăхмалла. Пирӗн халăхăн, пирӗн Хӗрлӗ Çарăн, Тинӗс-Çар флочӗн умра йывăр испытанисем тӳсме лекетха. Нимӗçсен фашистла разбойникӗсен урса кайнă бандисене тата вӗсен союзникӗсене пуçӗпех çӗнтерме вăхăт кирлӗ тата çакă вăл пирӗн боецсенчен, рабочисенчен, колхозниксенчен, интеллигенцирен жертвăсем ыйтать-ха.

Çӗнтерӳ тăвас тесен çакă кирлӗ: фронтра—вӗçӗ-хӗррисӗр геройлăх тата хурçă пек çирӗп дисциплина кирлӗ, тылра—вăя хӗрхенмесӗр ӗçлени, хурçă пек çирӗп дисциплина тытни тата организованно пулни кирлӗ. Иккӗленмелли çук, пирӗн совет халăхӗ, гитлерла захватчикӗсем хӗснине тӳссе ирттерме пултарнăскер,—ун пек хӗснине урăх нимӗнле çӗршыв та тӳссе ирттерме пултарайман пулӗччӗ,—нимӗç фашисчӗсемпе вӗсен союзникӗсене татăклăнах пӗтерсе тăкма хăйӗнче вăй тупӗ.

Пӗтӗм вăйсене фронта пулăшнă çӗре парар! Мӗнпур вăйсене—çӗнтерӳ тунă çӗре!

Сывă пултăр аслă совет халăхӗ тата унăн геройла Хӗрлӗ Çарӗпе Тинӗс-Çар Флочӗ!

Пире çӗнтерӳ патне чӗнекен Ленинăн—Сталинăн аслă та никам çӗнтерейми ялавӗ сывă пултăр!

Сывă пултăр пирӗн çулпуç тата полководец Сталин юлташ! (Пӗтӗм залра тăвăллă оваци. Пурте ура çине тăраççӗ).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн —3—99, ялхуçалăх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1217

Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6., 58. 84 п.